27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 АВГУСТ 9 ЮНКУН 156(6651) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ялти коммунистсемпе комсомолецсем, тырпул пухса кĕртес ĕçĕн организаторĕсем пулăр!

Тырпулсене вăхăтра тата тăкаксăр пухса кĕртес, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли плана ăнăçлăн тултарас ĕçре ялти коммунистсемпе комсомолецсем паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсем колхозсемпе МТС-сен тата совхозсен мĕнпур вăйĕсемпе майĕсене тырпула кĕске срокра пухса кĕртнĕ çĕре мобилизацилемелле, машинăсемпе тата туртăм вăйĕпе туллин усă курассине йĕркелемелле, тырă вырнă çĕрте, авăн çапнă çĕрте тырпула лайăх пухса илессине, ăна лайăх пăхса усрассине организацилемелле, колхозниксемпе колхозницăсене уйхирсенче хастарлăн ĕçлеме хавхалантармалла, пĕр сăмахпа каласан, вĕсем тырпул пухса кĕртес, государствăна тырă парас ĕçсен организаторĕсем пулма тивĕçлĕ. Çак хисеплĕ те чыслă тивĕçе ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесе, кашни коммунистпа комсомолецăн пример кăтартса, дисциплинăна çирĕп пăхăнса ĕçлемелле, политикăллă-массăллă ĕçе анлăн организацилесе пымалла.

Пирĕн совет халăхĕ Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче большевиксен партийĕ тавра нихăçанхинчен те ытларах пĕтĕçрĕ. Совет çыннисем Ленин—Сталин партийĕ çине шанса тăраççĕ. Большевиксем фронтра та, тылра та нимĕç захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкассишĕн вăйхăвата шеллемесĕр, ывăнма пĕлмесĕр кĕрешеççĕ. Халĕ тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра та эпир коммунистсемпе комсомолецсен хастарлă ĕçне кашни колхозрах, кашни МТС-рах курма пултаратпăр.

Вăрнар МТС-ĕн коллективĕ тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри планне июлĕн 25-мĕшĕнче тултарса çитерчĕ. Çак çитĕнĕве МТС, пуринчен ытла, коммунистсемпе комсомолецсен хастарлă ĕçне пула тума пултарнă. МТС-ри кашни коммунист, комсомолец хăйĕн ĕçĕнче пример кăтартса ĕçлет. Çав вăхăтрах ытти работниксене стахановла ĕçлеме пулăшать.

Октябрьски районри Туçа ялсоветĕнчи территориальнăй пуçламĕш парторганизаци хăйĕн пĕтĕм ĕçне тырпула пĕр тăкаксăр пухса кĕртес, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли плана срокчен тултарас май йĕркелесе пырать. Коммунистсемпе комсомолецсем агитаторсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем колхозниксемпе колхозницăсене юлашки хыпарсене пĕлтерсе тăраççĕ, малта пыракансен опычĕпе паллаштараççĕ. Юлашки вăхăтра СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен йышăннă постановление тĕплĕн ăнлантарса парас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçленĕ. Парторганизаци сдельщинăпа ĕçлессине вăйлатас тĕлĕшпе сахал мар тăрăшать. Çаксене пула, ялсоветри колхозсенче уйхир ĕçĕсем ăнăçлă пыраççĕ. Ялсовет районра малти вырăна тухнă.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçре комсомолецсем те хастарлăн тăрăшаççĕ. Вĕсем колхозниксем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелеме, транспортнăй бригадăсем организацилеме пулăшаççĕ, ответлă участоксенче ĕçлесе, ĕç нормине иртерсе тултараççĕ. Елчĕк районĕнчи комсомолецсем тырă вырнă, авăн çапнă çĕрте ĕçлеççĕ, вĕсенчен 116-шĕ машиноведсем, 94-шĕ кĕлте çыхакансем, 112-шĕ тырă выракансем пулса ĕçлеççĕ. Авăн çапнă çĕрте комсомолецсемпе çамрăксен 24 бригади ĕçлет. Тырпула сыхлама 31 çĕрте постсем организациленĕ. Кун пек примерсем вуншарăн илсе кăтартма пулать.

Партипе комсомол организацийĕсен, коммунистсемпе комсомолецсен хăйсен пĕтĕм вăйне тырă вырас, авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçсене татăклăнах хăвăртлатассишĕн кĕрешнĕ çĕре ямалла. Пĕтĕм ĕçĕн никĕсне СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен йышăннă постановление хумалла. Паян тумалли ĕçе ырана хăвармалла мар, кая юлсан каю шăтать.

Партипе комсомол организацийĕсен, коммунистсемпе комсомолецсен тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче социализмлă ăмăртăва пуçарса, вăйлатса пымалла. Вĕсен колхозниксемпе колхозницăсене хăйсем илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме стахановла ĕçпе тата большевикла сăмахпа мобилизацилемелле. Ăмăртура малта пыракансен опытне пур майсемпе те сарса пырса, кашни колхозникпа колхозницăна нормăна ытлашшипех тултарса ĕçлеме пулăшмалла.

Коммунистсемпе комсомолецсен тырпул тăккаланассинчен сыхланас ĕç çине уйрăмăнах тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Тăкаксенчен сыхланас тесе мĕнпур мерăсене йышăнмалла. Уйхирсенче пучахсем пухас ĕçе шкул ачисене, пионерсене анлăн явăçтармалла. Тырпула шута илес, ăна пăхса усрас ĕçе тивĕçлипе организацилес пулать. Колхоз тыррине салатма пикенекенсене çийĕнчех тăрă шыв çине кăларса, вĕсене тивĕçлипе ответ тыттармалла.

Колхозниксемпе колхозницăсене, МТС работникĕсене уйхирте хастарлăн ĕçлеме, машинăсемпе туллин усă курассишĕн кĕрешме мобилизацилесси политикăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса пымаллине пĕлтерет. Коммунистсемпе комсомолецсем çак ĕçе хăйсем йĕркелесе пыма тивĕçлĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем, МТС работникĕсем тĕнчери лару-тăру çинчен, Отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи ĕçсем тата партипе правительство йышăннă постановленисем çинчен тĕплĕн пĕлсе тăччăр.

Тырпулсене пухса кĕртесси — пĕтĕм халăх ĕçĕ. Колхозсемпе МТС-сен тата совхозсен мĕнпур вăйĕсемпе майĕсене тырпула кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнĕ çĕре, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли плансене вăхăтра тултарнă çĕре мобилизацилер! Хĕрлĕ Çарпа тăван çĕршыва çителĕклĕ тăран апатçимĕç, промышленноçа — чĕртавар тупса парар!

В. А. Малышевпа П. И. Паршин юлташсене çар званийĕсем парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **çапла йышăнать:**

Оборонăн Государственный Комитечĕн 1942 çулхи мартăн 7-мĕшĕнче тата 1943 çулхи февралĕн 4-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕсем тăрăх тунă çар званийĕсене çаксене парас:

ИНЖЕНЕРНО-ТАНКОВАЙ СЛУЖБĂН ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНЧĔН ЯТНЕ
Вячеслав Александрович **МАЛЫШЕВА.**

ИНЖЕНЕРНО-ТЕХНИЧЕСКИ СЛУЖБĂН ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНЧĔН ЯТНЕ
Петр Иванович **ПАРШИНА.**

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи августăн 5-мĕшĕ.

Совет летчикĕсем Хĕвелтухăç Пруссии çинче

ÇАПАÇУРИ ÇАР, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Нумаях пулмасть Хĕвелтухăç Пруссии çине пирĕн фронтри аэродромсенчен вĕçсе хăпаракан совет разведчикĕсен уйрăм ушкăнĕсем çеç вĕçевĕçе пынă. Чи малтан унта Овчинников майор ертсе пыракан «Яковлев—9» йышши самолетсен ушкăнĕ вĕçсе кайнă. Ирхине, тăшманăн фронт çывăхĕнчи çулйĕрĕсене тĕпчесе пĕлнĕ хыççăн, çав ушкăн Пĕр хулари çар объекчĕсене кĕтмен çĕртен тапăннă. Çакă вăл питĕ паллă ĕç пулнă. Вăл Хĕрлĕ Çар Германи çĕрĕ патне мĕн тери çывăх пырса тăнине кăтартнă. Унччен фашистсен территорийĕ çинче инçене вĕçекен сывлăш карапĕсем çеç вĕçнĕ. Халĕ, нимĕçсен ялĕсемпе хулисем çинче хĕрлĕ çăлтăрлă истребительсем кăнтăрлах вĕçме пуçларĕç.

Июлĕн 25-мĕшĕнче гварди подполковникĕ Лобов ертсе пыракан «Лавочкин—5» йышши самолетсен ушкăнĕ чугун çулсен пысăк узелĕ пулса тăракан Тильзит хулине штурмланă.

Ирхине пирĕн разведчиксен ушкăнĕ Совет Союзĕпе Германи чикки урлă вĕçсе каçнă. Çав ушкăнра истребительсем те, штурмовиксем те, бомбардировщиксем те пулнă. Тăшман мĕн тунине лайăх сăнасан, унăн тылĕпе çулйĕрĕсене пĕлсе çитсен, икĕ разведчик-истребитель — гварди лейтенанчĕ Новоселов тата гварди кĕçĕн лейтенанчĕ Перевеслов — Пруссии хулисем çине вĕçсе кайнă. Пĕр чугун çул станцийĕнче летчиксем боеприпассен пысăк складне асăрханă. Темиçе хутчен вĕçсе пырса, летчиксем çав склада сирпĕнтерсе янă.

Истребительсем-сунарçăсем Хĕвелтухăç Пруссии çинче тăшман самолечĕсене кунĕпех шыраса çӳренĕ. «Нормандия» ятлă авиаци чаçĕнчи истребитель кĕçĕн лейтенант Шаль питĕ пысăк ăсталăх тата çав тери пысăк хăюлăх кăтартнă. Вăл хăйĕн юлташĕсенчен пăрăнса кайнă та кĕтмен çĕртен тăшмана тĕл пулнă. Тăхăр «Юнкерс» малти позицисем патнелле вĕçсе пынă.

Истребитель тăшмана хăюллăн тапăннă. Вăл часах нимĕçсен пĕр бомбардировщикне персе ӳкернĕ. Нимĕç стрелокĕсем пеме тытăниччен вăл вĕсенчен меллĕн пăрăнса кайнă та тепĕр хут атакăлама хатĕрленнĕ.

«Юнкерссем» хăйсене хӳтĕлеме кирлĕ пек вырнаçса тăма пуçланă, вĕсем хăйсен территорийĕ çине вĕçсе кайма тăрăшнă. Кĕçĕн лейтенант гитлеровецсене тата икĕ хут атакăланă, вара вут хыпса илнĕ икĕ самолет çĕр çине персе аннă.

Истребительсемпе пĕр вăхăтрах тăшман территорине пирĕн штурмовиксен темиçе ушкăнĕ тапăннă. Викторовпа Бойцов офицерсем ертсе пыракан «Ильюшин—2» йышши самолетсен ушкăнĕсем Шталлупенен ятлă пысăк чугун çул станцине штурмланă та унта тăшманăн икĕ çар эшелонне сирпĕнтерсе янă. Кӳршĕри разъездра пĕр паровоза юрăхсăра кăларнă.

Штурмовиксене виçĕ «Мессершмитт» кансĕрлеме хăтланнă. Совет истребителĕсем вĕсене хăваласа янă.

Пирĕн çарсем Хĕвелтухăç Пруссин чикки патне пырса çитни совет летчикĕсене çĕнĕ чаплă ĕçсем тума хавхалантарать. Вĕсем тăшманпа çапăçма васкаççĕ, ăна хăйĕн мĕнпур тискер ĕçĕсемшĕн тавăрма, ăна нимĕç çĕрĕ çинче, нимĕç пĕлĕчĕ çинчех аркатма васкаççĕ.

Гварди капитанĕ Б. КОТЕЛЬНИКОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 7-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 7-мĕшĕнче пирĕн çарсем РЕЗЕКНЕ (РЕЖИЦА) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре çаплах малалла тапăнса пынă, ЛУБАНА хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ, вăл шутра — ЦЕПУРНЫЭКИ, ЛЫБЕНЫЭКИ, ЛУЗА, ПЛАТЕС ятлă пысăк ялсем. Пирĕн çарсем ГУЛБЕНЭ хулипе МАДОНА хули хушшинчи чугун çулпа шоссе çулне татнă.

ШАУЛЯЙ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, грунт çулĕсен КУРШЕНАЙ тата ШАВКЯНЫ ятлă пысăк узелĕсене туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—СМИЛЬГИ, ЯМУЛАЙЦЫ, КУРТОВЯНЫ, ГАВТОРЫ, ГОРДЫ ятлă пысăк ялсем.

КАУНАС (КОВНО) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, халăх пурăнакан 40 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — АНДРУШАЙЦЕ, ТРАКУЦЕ, ПЛИНГЕ, ПРОМЕДЗОВО, ПУШИНЕ, ПАГРЯЙЦЫ, ЗУБРИ ятлă пысăк ялсем.

БЕЛОСТОК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, КНЫШИН, ЛАПЫ хулисене туртса илнĕ.

САНДОМИР хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ВИСЛА шывĕн сулахай хĕрринчи плацдарма аслăлатасшăн ăнăçлăн çапăçнă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — СОСНИЧАНЫ, КЛИМОНТУВ, КОНАРЫ, БОГОРИЯ ШИДЛУВ, ПШИБОРУВ ятлă пысăк ялсем тата БОГОРИЯ чугун çул станцийĕ.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем вăйлă çапăçусем хыççăн августăн 7-мĕшĕнче нимĕçсен КАРПАТ тăвĕсем умĕнчи оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне САМБОР хулипе пысăк чугун çул узелне штурмласа туртса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, августăн 7-мĕшĕнче Хĕвеланăç Украинăн нефть кăларакан промышленноçĕн пысăк центрне—БОРИСЛАВ хулине туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Августăн 6-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 110 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 117 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Резекне (Режица) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре совет чаçĕсем, кăнтăр енчен тата çурçĕр енчен пыра-пыра çапса, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ пунктне—Лубана хулине туртса илнĕ. Резекне хулипе Мадона хули хушшинчи шоссе çулĕн районĕнче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă хыççăн пирĕн çарсем нимĕçсене каялла хăваласа янă, унтан, çитĕнĕве вăйлатса пырса, Куя шывĕ урлă каçнă. Кун каçиччен 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Хăй тĕллĕн çӳрекен 13 тупăпа хир туппине, 2 зенитнăй батарея, 10 миномет, 3 боеприпас склачĕ тытса илнĕ. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери нимĕçсен 18 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Каунас хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем анлă фронтра Дубисса шывĕ урлă каçнă та малалла наступлени туса пынă. Тăшман час-часах контратакăсем тăвать, анчах та совет чаçĕсем малалла кайнине чарма пултараймасть. Вăйлă çапăçу хыççăн пирĕн подразделенисем нимĕçсен оборонин Андрушайце ятлă тĕреклетнĕ пунктне туртса илнĕ. Халăх пурăнакан çак пункт патне пымалли вырăнсенче тăшманăн темиçе çĕр виллине выртса юлнă. Кун каçиччен пĕр пич нимĕç салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 10 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен тупă, 13 хир туппи тата 56 пулемет пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн авиаци тăшманăн Хĕвелтухăç Пруссири чугун çул станцийĕсемпе аэродромĕсене хăватлăн пыра-пыра çапнă. Инстербург станцийĕнче, бомбăсем пăрахнине пула, 6 çĕрте пушар тухнă. Эйдекунен станцийĕнче çарсемпе горючи тиенĕ темиçе эшелона çунтарса е çĕмĕрсе тăкнă. Пилькаллен аэродромне тапăннă чухне пирĕн истребительсем тăшманăн çĕр çинчи 4 бомбардировщикĕпе 2 истребительне çунтарса янă. Кун каçиччен сывлăшри çапăçусенче совет летчикĕсем нимĕçсен 20 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Белосток хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем тăшмана Яскранка шывĕ çинчи рубежран хăваласа янă та Кнышин хулипе шоссе çулĕсен узелĕ патнелле татса кĕнĕ. Нимĕçсем артиллери тата минометсем нумай пухса тăратнă, вăйлă персе тăрса тата контратакăсем тăва-тăва, вĕсем çав позицие каялла туртса илме хăтланнă, анчах та вĕсен ĕçĕ ăнăçман. Совет артиллерисчĕсем, пехота валли çул тасатса пырса, 60 пулемета, минометсен 13 батарейине тата 15 артиллери батарейине пусарса лартнă. Пирĕн чаçсем Кнышин хулине вăркăнса кĕрсе кайнă та каçхи çапăçу хыççăн ăна фашистла нимĕç захватчикĕсенчен тасатнă. Трофейсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Белосток хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Нарев шывĕ урлă каçнă. Тăшман резервсем илсе пынă та 20 контратака ытла тунă. Совет чаçĕсем тăшман атакисене пурне те ăнăçлăн сирсе янă, унтан малалла куçса пырса, Лапы хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ. Нимĕçсен 17 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Йышлă хĕçпăшал тата çар япалисем нумай тытса илнĕ.

* * *

Сандомир хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ирхине ирех тăшмана вăйлăн пырса çапнă та унăн Копшивянка шывĕ çинчи оборонине татнă. Совет танкĕсемпе пехоти 10 километр малалла кайнă, хăйĕн çулĕ çинче тăшманăн тĕл пулнă темиçе гарнизонне аркатса тăкнă. Пĕр соединени чаçĕсем 900 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, 20 танк пĕтерсе тăкнă. Трофейсем нумай тытса илнĕ. 500 нимĕçе ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕ пулса тăракан Самбор хули патне пымалли вырăнсене тухнă. Тăшман чугун çулсен çак паха узелне хытă хӳтĕленĕ, хăйĕн пысăк вăйĕсемпе татти-сыпписĕр контратакăсем тунă. Пирĕн танксемпе пехота хулана хĕвеланăç енчен çаврăнса илнĕ, нимĕçсен каялла чакмалли тĕп çулĕсене татнă.

Вăйлăрах та вăйлăрах пыра-пыра çапса, совет чаçĕсем Самбор хулине вăркăнса кĕрсе кайнă, тăшманпа хула урамĕсенче хытă çапăçма тытăннă. Паян пирĕн çарсем тăшман гарнизонне аркатса тăкнă та Самбор хулипе чугун çул узелне пĕтĕмпех туртса илнĕ. Тăшмана питĕ пысăк çухату тӳстернĕ. Пирĕн пĕр соединени кăна кун каçиччен 1.600 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, 11 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен тупă пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 8 танкне тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 4-мĕш фронт çарĕсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Нимĕçсемпе венгерсен унчченхи çапăçусенче лăскаса тăкнă чаçĕсем нефть кăларакан промышленноçăн пысăк центрĕ патнелле—Борислав хули патнелле пымалли вырăнсенче хирĕç тăма хăтланнă. Пирĕн çарсем, аркатмаллах пыра-пыра çапса, тăшмана каялла хăваласа янă та Борислав хулине туртса илнĕ. Тыткăна нумай илнĕ. Трофейсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Чудь кӳллинче юханшыв тăрăх çӳремелли парохода, хăвăрт çӳрекен 2 десант баржине, 3 баржăна тата 2 катера шыва путарнă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 5 самолетне персе ӳкернĕ.

Çамрăксен бригадисем ăмăртса ĕçлеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. «Труд» промысла артелĕ çур çулхи производство планне продукци туса кăларас енĕпе 116 процент тултарчĕ. Производство планне ăнăçлăн тултарас тĕлĕшпе уйрăмăнах комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пычĕç.

Христина Иванова юлташ ертсе пыракан çамрăксен бригади уйăхран уйăхах производство планне ӳстерсе тултарать. Май тата июнь уйăхĕсенче вăл плана 160 процент ытла тултарнă. Çак бригадăна кăтартуллăн ĕçленĕшĕн ВЛКСМ Чăваш обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла тунă.

Çавăн пекех Якимова, Прокопьев тата Семенов юлташсем ертсе пыракан çамрăксен бригадисем те июнь уйăхĕнче лайăх ĕçлерĕç.

Производствăра малта пыракан рабочисем парти ретне кĕреççĕ. Юлашки вăхăтра тăхăр стахановеца парти членĕн кандидатне илнĕ. Вĕсем кашниех производство планне иртерсе тултараççĕ. Продукци пахалăхне ӳстерессишĕн кĕрешеççĕ.

Çамрăксен квалификацине ӳстерес тĕлĕшпе артельте мастерсем пулма вĕренмелли шкул организациленĕ. Халĕ унта 18 çын вĕренет. Çитес вăхăтра вĕсем хăйсем тĕллĕн ĕçлекен мастерсем пулаççĕ.

П. ЛЕНАР.

Июльри плана тултарнă

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод коллективĕ кăçалхи июль уйăхĕнчи плана 100,8 процент тултарнă. Цех коллективĕсен ăмăртăвĕнче Кинсбургский юлташ начальник пулса ĕçлекен цех мала тухнă. Вăл уйăхри плана 111,5 процент тултарнă. Семенов тата Фомкин юлташсем начальник пулса ĕçлекен цехсем те начар мар ĕçленĕ.

ВЦСПС палăртнă тăрăх, завод июль уйăхĕнче Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура иккĕмĕш вырăн йышăннă.

ВИÇĔ АРУ

Укерчĕк çинче: вырăс çарĕн ватă салтакĕ Д. И. Мамрикишвили, ăна 1914—1918 çулхи вăрçă вăхăтĕнче тăватă Георгий хĕресĕпе тата пĕр медальпе наградăланă; Совет Союзĕн Геройĕ кĕçĕн лейтенант К. Е. Ткабладзе; Кутаисири суворовла çар училищин воспитанникĕ отличник Н. Чиквиладзе.

П. ЛУЦЕНКО фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР-ĕнчи уйрăмах паларнă учительсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Юлашки. Пуçламĕшĕ «Чăваш Коммунин» 150-мĕш, 151-мĕш тата 152-мĕш номерĕсенче).

86. Яков Арсентьевич **Майорова** — Сĕнтĕр районĕнчи Шомикри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительне.
87. Клавдия Елизаровна **Меркурьевăна** —Шупашкар районĕнчи Шемшер вăтам шкулĕн учительницине.
88. Антонина Ивановна **Миловидовăна**— Первомайски ялĕнчи вăтам шкулăн учительницине.
89. Георгий Михайлович **Малюткина** — Çĕмĕрле районĕнчи Чăваш Улхашри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорне.
90. Матрена Герасимовна **Мотуза** — Чăвашсен государство педагогика институчĕн физикăпа математика факультечĕн деканне.
91. Пелагея Матвеевна **Наперсткинăна**— Чкаловски районри Кив Катек пуçламĕш шкулĕн учительницине.
92. Петр Никитич **Никитина** — НКВД-ăн Шупашкарти ачасен ĕç колонийĕ çумĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕрентӳ пайĕн начальникне.
93. Петр Николаевич **Николаева** — Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн кадрсен управленийĕн начальникне.
94. Ольга Николаевна **Никифоровăна** — Пăрачкав районĕнчи Сиява вăтам шкулĕн учительницине.
95. Никифор Нифонтович **Нифонтова** — Тăвайри педагогика кабинечĕн заведующине.
96. Александр Григорьевич **Обухова** — Улатăр районĕнчи Чуварлейри суккăр ачасен шкулĕн директорне.
97. Исай Николаевич **Орлова** — Советски районри Яракассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорне.
98. Татьяна Ивановна **Орловăна** — Шупашкарти Чапаев поселокĕнчи вăтам шкулăн учительницине.
99. Елена Павловна **Павловăна** — НКВД-ăн Етĕрнери ачасен ĕç колонийĕ çумĕнчи çичĕ çул вĕренмели шкулăн учительницине.
100. Константин Павлович **Павлова** — Вăрмар районĕнчи Сĕнтĕр пайĕн заведующине.
101. Прасковья Ивановна **Павловăна** — Комсомольски районри Тăман Выçлинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительницине.
102. Мария Ефимовна **Панишевăна** — Шупашкарти хĕрачасен 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн учительницине.
103. Марфа Парамоновна **Парамановăна**— Тăвай районĕнчи Лачкасси пуçламĕш шкулĕн заведующине.
104. Мария Григорьевна **Педькона** — Çĕмĕрлери 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн учительницине.
105. Аполинария Петровна **Петровăна**— Ишлей районĕнчи Кипеч-кассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорне.
106. Елизавета Павловна **Петровăна** — Шупашкарти арçын ачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн учительницине.
107. Михаил Петрович **Петрова** — Шупашкар районĕнчи Шемшер вăтам шкулĕн директорне.
108. Нина Петровна **Петровăна** — Елчĕк вăтам шкулĕн директорне.
109. Сергей Яковлевич **Петрова** — Ишлей районĕнчи Мăналти çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительне.
110. Антонина Петровна **Просвирнинăна** — Кувакино районĕнчи Мурдаковăри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительницине.
111. Дария Ивановна **Прохоровăна** — Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн учительницине.
112. Фекла Максимовна **Прохоровăна**— Муркаш районĕнчи Ямайкасси пуçламĕш шкулĕн заведующине.
113. Елизавета Ивановна **Пушкинăна**— Комсомольски районри Кив Шăхасан пуçламĕш шкулĕн заведующине.
114. Кирилл Романович **Романова** — Елчĕк районĕнчи Эндриелĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорне.
115. Юлия Федоровна **Романовăна**—чăвашсен государство педагогика институчĕн преподавательне.
116. Зинаида Петровна **Савиновăна** — Çĕрпӳ вăтам шкулĕн учительницине.
117. Александра Семеновна **Семеновăна** — Калининори педагогика училищин преподавательне.
118. Валентина Сергеевна **Сергеевăна**— Шупашкарти хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн директорне.
119. Мария Сергеевна **Сергеевăна** — Элĕк вăтам шкулĕн вĕренӳ пайĕн заведующине.
120. Анна Осиповна **Смирновăна** — Муркаш районĕнчи Янăмри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительницине.
121. Александра Аркадьевна **Соловьевăна** — Шăхасан вăтам шкулĕн учительницине.
122. Олимпиада Михайловна **Сорокинăна** — Чкаловски районри Патăръелĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорне.
123. Василий Спиридонович **Спиридонова** —Красноармейски районри Çавалкасси Упи вăтам шкулĕн учительне.
124. Аполинария Степановна **Степановăна** — Канаш районĕнчи Янкăлч вăтам шкулĕн вĕренӳ пайĕн заведующине.
125. Герман Степанович **Степанова** — Елчĕк райçутĕç пайĕн заведующине.
126. Юлия Степановна **Степановăна** — Шăхасан вăтам шкулĕн учительницине.
127. Серафима Григорьевна **Сульдинăна** — Улатăр районĕнчи Атрать вăтам шкулĕн учительницине.
128. Зоя Гавриловна **Тарбеевăна** — Октябрьски районри Урхас-Кушкăри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорне.
129. Наталия Наумовна **Тихоновăна** — Канашри 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн вĕренӳ пайĕн заведующине.
130. Сергей Матвеевич **Толмачева** — Шупашкарти 3-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн учительне.
131. Аполинария Васильевна **Топтыгинăна** — Сĕнтĕрвăрри вăтам шкулĕн учительницине.
132. Анна Дмитриевна **Трофимовăна** — Етĕрне вăтам шкулĕн учительницине.
133. Фекла Андреевна **Тюмеровăна** — Куславкка райçутĕç пайĕн инспекторне.
134. Елена Ермолаевна **Ухватовăна** — Шупашкарти хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн учительницине.
135. Мария Алексеевна **Федоровăна** — Калинино районĕнчи Чалăм-Кăкшăм пуçламĕш шкулĕн заведующине.
136. Вера Николаевна **Харловăна** — Куславкка районĕнчи Гоголиха пуçламĕш шкулĕн учительницине.
137. Сергей Иванович **Федорова** — Çĕмĕрле районĕнчи Хутар вăтам шкулĕн учительне.
138. Георгий Иванович **Чавкана** — Чăвашсен государство педагогика институчĕн доцентне.
139. Варвара Васильевна **Черновăна** — Шупашкарти çичĕ çул вĕренмелли чăваш шкулĕн учительницине.
140. Анастасия Степановна **Чуринăна** — Комсомольскинчи вăтам шкулăн учительницине.
141. Александра Михайловна **Шалфеевăна** — ВКП(б) Обкомĕн шкулсен отделĕн заведующине.
142. Елена Петровна **Шестаковăна** — Шупашкар районĕнчи Çĕньялти çичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕренӳ пайĕн заведующине.
143. Вера Владимировна **Щербаковăна**— Вăрмар районĕнчи Чулкаç-Сĕнтĕр пуçламĕш шкулĕн заведующине.
144. Вера Ивановна **Шишовăна** — Кувакино райçутĕç пайĕн заведующине.
145. Манефа Кузьминична **Шумиловăна**— Етĕрне районĕнчи Ойкас-Чотай пуçламĕш шкулĕн заведующине.
146. Трофим Яковлевич **Яковлева** — Октябрьски районри Хуракасси вăтам шкулĕн директорне.
147. Юлия Кирилловна **Яковлевăна** — Комсомольски райçутĕç пайĕн инспекторне.
148. Иван Егорович **Ярадайкина** — Етĕрнери педагогика училищин преподавательне.
149. Осип Михайлович **Ятманова** — Елчĕк районĕнчи Лаш-Таяба вăтам шкулĕн учительне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи июлĕн 25-мĕшĕ.

Смоленскри çĕвĕçсен хаклă пуçарăвĕ

Предприятисене часрах юсаса хута ямалли ăмăрту

Смоленск облаçĕнчи хуласемпе ялсенчи ĕççыннисем Октябрьти социализмлă революци 27 çул тултарнине тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Çав кун Смоленск облаçне нимĕç оккупанчĕсенчен пĕтĕмпех ирĕке кăларни те çулталăк тултарать. Ĕççыннисем ищĕлнĕ хуçалăха часрах юсаса ура çине тăратасшăн ăмăртса ĕçлеççĕ.

Çав ăмăртăва «Красный швейник» фабрикин коллективĕ пуçарса янă. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕМ ТЫРПУЛСЕНЕ ПУХСА КĔРТМЕЛЛИ ПЛАНА 1944 ÇУЛХИ АВГУСТĂН 5-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (Процентпа)

РАЙОНСЕМ	[illegible]	[illegible]
Чурачĕк	37,7	5,2
Елчĕк	31,9	3,4
Чкаловски	31,8	6,0
Шăхасан	29,6	7,7
Калинино	27,8	3,8
Комсомольски	27,3	4,9
Çĕрпÿ	24,1	27,2
Красноармейски	23,4	5,9
Тăвай	22,0	4,4
Вăрнар	23,0	3,3
Октябрьски	22,5	1,8
Вăрмар	21,6	—
Кусланка	21,2	11,1
Канаш	20,6	18,0
Муркаш	20,3	9,2
Советски	20,0	26,1
Пăрачкав	19,1	8,2
Шăмăршă	18,5	8,4
Етĕрне	18,1	4,4
Элĕк	17,4	0,3
Шупашкар	17,1	7,5
Хĕрлĕ Чутай	15,6	11,5
Çĕмĕрле	15,3	11,1
Сĕнтĕрвăрри	15,2	5,2
Йĕпреç	14,3	7,6
Çĕнтĕр	14,1	4,8
Ишлей	13,4	5,6
Первомайски	12,4	4,1
Улатăр	9,9	—
Куйбышево	9,5	—
Пĕтĕмпе	21,8	9,0
Августăн 1-мĕшĕ тĕлне пулнă	11,0	—

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕМ СИЛОС ХЫВМАЛЛИ ПЛАНА 1944 ÇУЛХИ АВГУСТĂН 5-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (Процентпа)

Районсем	Силос хывнă
Чурачĕк	116,1
Сĕнтĕрвăрри	105,0
Çĕмĕрле	102,2
Шупашкар	101,7
Çĕрпÿ	101,5
Комсомольски	101,4
Красноармейски	100,3
Вăрнар	95,5
Çĕнтĕр	95,1
Куйбышево	94,6
Элĕк	91,5
Вăрмар	88,9
Муркаш	86,6
Чкаловски	86,5
Улатăр	85,7
Елчĕк	83,2
Шăмăршă	82,2
Калинино	80,2
Етĕрне	77,0
Йĕпреç	75,4
Первомайски	73,8
Октябрьски	73,4
Пăрачкав	72,6
Тăвай	70,2
Кусланка	68,1
Шăхасан	66,0
Канаш	63,0
Советски	62,0
Ишлей	53,8
Хĕрлĕ Чутай	49,2
Пĕтĕмпе	83,5

Чи малтан çапнă тырра—государствăна

ШĂХАСАН, августăн 8-мĕшĕ. (Хамăр корр.). «Красный партизан», «Активист», [illegible] колхозсем кĕрхи тырăсене районра чи малтан, 5 кун хушшинче выраса пĕтерчĕç. «Красный партизан» колхоз [illegible] тата 9 гектар урпа вырчĕ. [illegible] А. Яковлева, А. Петрова, М. Гаврилова, М. Григорьева колхозницăсем [illegible] норма тултараççĕ; 0,20 гектар выраççĕ.

Районри ыраш кулленех çĕнĕ те çĕнĕ колхозсем выраса пĕтереççĕ. «Новый путь», «Комсомол», «Новая жизнь», Ворошилов ячĕпе тăракан тата «Память Ильича» колхозсем, ыраш вырса пĕтерсе, [illegible] çапма тытăнчĕç. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз чи малтан çапнă тырра 28 центнер, «Прожектор» колхоз 16 центнер [illegible] пунктне хĕрлĕ обоза леçсе пачĕ.

С. ШАДИН.

Колхозниксем тырă выраççĕ, Таланцев вăйă вылять

СЕНТЕРВАРРИ. (Телефонпа). Шĕнерпуç ялсоветне кĕрекен «Науке Ленина» колхоз тырпулсене пухса кĕртес ĕçре юлса пырать. Пурĕ 152 гектар вырмалла, халĕ вĕсен 22 гектар çеç вырнă. [illegible]

[illegible]

Ф. ИЛЬИН.

Выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе ялансах ĕçлемелле

КУСЛАВККА. (Телефонпа). Район парти колхозсем ВКП(б) Обкомĕн XIX пленумĕн [illegible] выльăх-чĕрлĕхе валли [illegible] апат хатĕрлессишĕн кĕрешеççĕ. [illegible]

«Динамо» колхоз кăçал ферма çумĕнчи участока 4,7 гектар çĕрулми тата выльăх кăшманĕ лартрĕ. Вĕсене вăхăтра çумланă тата купаланă. Çамрăк выльăхсене çитерме 11 центнер витаминлă утă, 7 центнер вĕлтрен, 4 центнер арăмути, 25 лав йывăç милĕкĕсем хатĕрлесе типĕтнĕ. 60 тонна силос хывнă.

«Спартак» колхозра фермăсенче ĕçлекенсен вăйĕпе кăна 30 тонна силос хывнă, витаминлă утă 15 центнер, 24 центнер вĕлтрен, 3 центнер арăмути, 20 лав йывăç милĕкĕ хатĕрленĕ.

«Большевик» тата «16-мĕш партсъезд» колхозсен план тăрăх 100-шер тонна силос хывмалла пулнă, плана вĕсем ыраш вырма тухиччен тултарнă. Чылай колхозсем силос хывмалли плана юлсах тултараççĕ. Çапла, А. А. Андреев ячĕпе тăракан колхоз 50 тонна вырăнне 60 тонна, «Красный Курган» колхоз 65 тонна вырăнне 80 тонна хывреç. Çак колхозсем хĕлле валли выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Анчах та «Коммунар», «Ударник», «Большевик», «Красный партизан», «Красная Волга», «Путь Ленина» тата ыттисем те, пурĕ 10 колхоз, çак вăхăта çитсе те силос хывман, ытти апатсем хатĕрлес пирки те сÿрĕк ĕçлеççĕ. Çак колхозсен иртнĕ çулхи уроксенчен кирлĕ пек вывод тумалла, выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе пиленерех ĕçлемелле.

Районри колхозсем 2.508 тонна силос хывнă, çапла вара ыраш вырма тухиччен эпир плана пурĕ те 59 процент кăна тултартăмăр.

Е. НИКОЛАЕВА.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Малта пыракан колхозниксем парти ретне кĕреççĕ

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче колхозниксемпе колхозницăсем большевикла парти тавра татах та таччăнрах пĕтĕçрĕç. Çакна парторганизаци йышĕ ÿсни те лайăх кăтартса парать.

Пирĕн Красноармейски районри парторганизаци 1942 çулхи октябрь уйăхĕнчен пуçласа 1944 çулхи июль уйăхне çитиччен парти членне 49 çынна, парти членĕн кандидатне 96 çынна илнĕ. Пĕр çулталăк каярах районра партин пуçламĕш организацийĕсем 8, кандидатсен групписем 3 пулнă пулсан, халĕ партин пуçламĕш организацийĕсем 11, кандидат групписем 7 шутланаççĕ.

Парти ретне çĕнĕ членсемпе кандидатсем йлесси, вĕсене воспитани парасси — парти райкомĕн кулленхи задачи пулса тăрать. Парти хăйĕн членĕсем йышлипе çеç мар вăйлă, партин вăйĕ унăн членĕсен ĕçри пахалăхĕ лайăх пулнинчен килет. Партие çĕнĕрен илнĕ юлташсем — районри чи лайăх, малта пыракан, парти ĕçне чĕререн юратакан çынсем.

Парти райкомĕ çак çулта хĕрарăмсен малта пыракан трактор бригадин бригадирне Ульяна Николаева юлташа парти членĕн кандидатне илчĕ. Николаева юлташ ертсе пыракан бригада çулран çулах хăйĕн планне ирттерсе тултарать. Кăçалхи çуракинче унăн бригадинчи трактористкăсем пурте хăйсен планĕсене республикăра чи малтан тултарчĕç, 500 килограмм горючи перекетлерĕç.

Мартынкассинчи туллимар вăтам шкулĕн учитель Василий Антонов — Отечественнăй вăрçă участникĕ, нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн çапăçнă. Правительство унăн паттăрла ĕçне пысăка хурса хакланă, ăна Отечественнăй вăрçăн пĕррмĕш тата иккĕмĕш степень орденĕсемпе наградăланă. Нумаях пулмасть Антонов юлташ парти членĕн кандидатне кĕчĕ.

«Жнейка» колхоз ытти çулсенче пур ĕçре те кая юлса пыратчĕ. Председатель пулса ĕçлеме фронтовик Иван Петров юлташа суйланă хыççăн, колхоз малти рете тухрĕ. Кăçал Петрова парти ретне илнĕ. Çакăн хыççăн Петров юлташ тата лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. Хăйĕн политикăллă пĕлĕвне ÿстерсе пырать. Колхоз уборкăна тĕплĕн хатĕрленсе тухрĕ, çĕртме тăвас ĕçе ăнăçлăн вĕçлерĕ. Кун пек тĕслĕхсем сахал мар илсе кăтартма пулать.

1944 çулти ултă уйăх хушшинче парти членне 18 колхозника, парти членĕн кандидатне 43 колхозника илнĕ.

Уйрăмăн илсен, парти ретне çĕнĕ членсемпе кандидатсем илес тĕлĕшпе Упири территориальнăй парторганизаципе Именкассинчи пуçламĕш организаци лайăх ĕçлеççĕ. Упири парторганизаци çулталăк çурă вăхăтра 5 çынна кандидата, 4 çынна члена илнĕ. Именкассинчи парторганизаци (секретарĕ А. Иванов юлташ) 5 çынна парти членĕн кандидатне, 4 çынна члена илнĕ. Çавăн пекех Алманчри пуçламĕш парторганизаци те малта пыракан колхозниксене парти ретне илессипе начар мар ĕçленĕ.

Анчах та çаксем ĕнтĕ пĕрре те лăпланса лармалла хушмаççĕ. Парти ретне лайăх ĕçлекен колхозниксене илес тĕлĕшпе эпир çителĕксĕр ĕçлетпĕр-ха. Ку таринччен парти членне тата парти членĕн кандидатне илнисен пĕтĕм хисепĕнчен 50 процент ытла служащисем, 40—45 процент колхозниксем шутланаççĕ. Паллах ĕнтĕ, парти ретне колхозниксемпе трактористсене, комбайнерсене ытларах илессишĕн çине тăрса ĕçлемелле.

«Коминтерн», «Янмурзино» колхозсенче лайăх ĕçлекен стахановецсем, парти ретĕнче пулма тивĕçлĕ çынсем сахал мар. Анчах та парторганизаци секретарĕ Н. Степанов юлташ лайăх ĕçлекен колхозниксене парти ретне илес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхозри тата Мăн Шетмĕри пуçламĕш парторганизацисенче те парти ретне ÿстерес, колхоз активне политикăллă воспитани парса пырас тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ. Машинно-тракторнăй станцинчи парторганизаци юлашки вăхăтра парти ретне çĕнĕ çынсем илес ĕçе чылаях вăйлатрĕ пулин те, вăл пысăк çитенÿ туна теме çук-ха. Мĕншĕн тесен, лайăх комбайнерсемпе трактористсем нумай. МТС-ри 74 трактористран 70 трактористсĕ 1944 çулхи çуракинче тумалли ĕçсен планне 200—250-шар процент тултарнă. Серафима Иванова, Софрон Арсентьев, Никита Степанов, Ирина Нестерова тата ытти нумай трактористсем çулсеренех хăйсен планĕсене тултарса ĕçлеççĕ.

Трактористсем, колхозниксем хăйсен ĕçне чĕререн юратса, паха туни — Ленин-Сталин партин ĕçне парăнса тăнине яруççăн кăтартса парать. Анчах та хăшпĕр чухне пуçламĕш парторганизацисенче производствăри кăтартусемпе ÿсĕмсене курмаççĕ.

Калас пулать, партие илнĕ чухне çитменлĕхсем те пулнă. Хăшпĕр чухне пуçламĕш парторганизацисенче партие кĕме ыйтса çырнă заявленисене вăхăтра пăхса тухман. Именкассинчи парторганизацинче Соснина юлташăн заявленине пăхса тухмасăр икĕ уйăх вырттарнă. Райсовет исполкомĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче Н. Алексеев, А. Егорова юлташсем парти билечĕсене фотоÿкерчĕксем вăхăтра хатĕрлемен пирки кая юлса илнĕ. Çакнашкал çитменлĕхсем пуçламĕш парторганизаци секретарĕсем ĕç çине тимлĕн пăхманнинчен килеççĕ.

Парти ретне ÿстерсе пынипе пĕрлех, çамрăк коммунистсене пулăшса, воспитани парса пырассине манса хăвармалла мар. Парти членĕн кандидатне илнĕ юлташсене члена илме хатĕрлес пулать. Ку тĕлĕшпе çамрăк коммунистсене партин организацилле принципĕсене, уставпа программăна тĕплĕн вĕрентмелле. Çак тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕ семинарсем туса ирттернĕ. Анчах çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçе чылай вăйлатмалла-ха.

Н. ГРИГОРЬЕВ, ВКП(б) Красноармейски райкомĕн секретарĕ.

МТС-ри коммунистсен ĕçĕ

ИШЛЕЙ. Машинно-тракторнăй станци кăçалхи çураки планне 133,4 процент тултарчĕ. Пур ĕçе те лайăх пахалăхпа тунă.

Мĕнле тума пултарнă-ха МТС коллективĕ çак çитĕнĕве?

Çуракине тухас умĕн партин пуçламĕш организацийĕ коммунистсен уçă пухăвне ирттернĕ. Пухура бригадăсенче калаçу ирттерекенсем, стена хаçачĕ кăларакансем, агитаторсем пулнă. Кунсăр пуçне, пур трактористсемпе трактористкăсене те пухса, производствăллă канашлу ирттернĕ. Кунта трактор бригадин бригадирĕсем, трактористсемпе трактористкăсем, хăйсем çине обязательствăсем илсе, пĕрпĕринпе социализмлă ăмăртăва тухнă.

Ăмăртура 1-мĕш бригада мала тухрĕ. Бригада, хăйĕн планне 201,4 процент тултарса, 678 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Бригадир коммунист Н. Елахов трактористсем хушшинче кулленхи ыйтусем тăрăх калаçусем ирттерет, тĕнчери лару-тăрупа фронтри ĕçсем çинчен каласа парать. Ĕçре çитменлĕхсем пулсан, канашлусем ирттерсе, сÿтсе-явать. Бригадăра тăтăшах стена хаçачĕ тухса тăрать. Ку бригадăра пĕтĕмпех хĕрачасем ĕçлеççĕ. Бригадăри 8 трактористкăран пурте плана ирттерсе тултарнă. Çапла хастарлăн ĕçленипе 1-мĕш бригада МТС-ра куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялава илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Коммунист М. Ванеев юлташ ертсе пыракан трактор бригади — 2-мĕш вырăн, коммунист К. Мазяров бригади—3-мĕш вырăн йышăнчĕç. Çак бригадăсем плана 150—160 процент тултарнă.

МТС-ри 13 трактор бригадинчен 11-шĕ çуракинчи ĕçсен планне ăнăçлă пурнăçланă.

Партин пуçламĕш организацинче 17 коммунист. Вĕсем пурте тенĕ пекех производствăра ĕçлеççĕ. Трактористка, парти членĕн кандидачĕ М. Толстова çуракинче хăйĕн планне 273 процент тултарнă. Коммунист—старши механик Н. Кириллов трактористсем хушшинче пысăк авторитетпа усă курать. Вăл тракторсене юсас ĕçе лайăх организациленĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ тракторсем ĕçре чарăнса тăмаççĕ.

Халĕ тырпул пухса кĕртес ĕç пуçланчĕ. Машинно-тракторнăй станцинчи коммунистсем уборкăра татах та лайăхрах ĕçлеме сăмах панă. Çак кунсенчех комбайнсем ĕçлеме тытăнаççĕ. Вĕсене лайăх юсаса хатĕрленĕ.

В. ГУСЬКОВ.

Çурçĕр Францири икĕ уйăх хушшинчи вăрçă ĕçĕсем

НОРМАНДИ, августăн 6-мĕшĕ. (ТАСС-ăн çар корреспонденчĕ). Союзниксен Нормандири çарĕсен малтанхи уйăх хушшинче тунă вăрçă ĕçĕсен тĕп тĕллевĕ çакă пулнă: плацдарм йышăнмалла, çав плацдарма хăйсен аллинче тытса тăмалла, çĕнĕ çарсем антарма çителĕклĕ майсем туса памалла. Çак ĕçсем вĕсем, пĕтĕмĕшпе илсен, оборонăра тăрса çапăçас ĕçсем пулнă. Иккĕмĕш уйăхри вăрçă ĕçĕсем вара тăшмана фронтăн пур участокĕсенче те умлăн-хыçлăн пыра-пыра çапни пулса тăраççĕ. Çавăн пек пыра-пыра çапса, союзниксен çарĕсем нимĕçсене чылай пысăк пораженисем тÿстернĕ, анчах ку çеç мар, вĕсем хăйсем тытса илнĕ плацдармăн территорине те темиçе хут та аслăлатнă.

Иккĕмĕш уйăхра вăрçă ĕçĕсем çак йĕркепе пулса пынă:

Июлĕн 8-мĕшĕнче Англи армийĕн çарĕсем тăшмана Кан хули еннелле пырса çапнă, июлĕн 10-мĕшĕнче Орн шывĕн сулахай енне пырса тухнă. Унтан Америка çарĕсем сылтăм флангăн пĕтĕм тăршшĕпех çыран хĕррипе наступлени пуçласа янă та Лессэ хулипе Сен-Ло хули хушшинчи çул çине тухнă. Июлĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи çарĕсем тăшмана Эвреси хули еннелле пырса çапнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Июлĕн 16-мĕшĕнче Америка çарĕсем Сен-Ло хули еннелле наступлени пуçласа янă та июлĕн 18-мĕшĕнче çулсен çав паха узелне туртса илнĕ. Июлĕн 18-мĕшĕнче ирхине Англи çарĕсем тăшмана Кан хули районĕнче вăйлăн пырса çапнă, унтан 12 километр таран малалла кайнă та Франци территорийĕ ăшнелле каякан çулсен çак узелне хăйсен аллине çирĕп ярса тытнă. Июлĕн 26-мĕшĕнче Америка армийĕ хăйĕн фрончĕн пĕтĕм тăршшĕпе тенĕ пекех наступлени пуçласа янă, нимĕçсен оборонине татнă, кăнтăралла çав тери хăвăрт кайма тытăннă. Нимĕçсем хăйсен резервĕсене унччен татнă вырăнсене ярса пĕтернĕ пулин, çавăнпа вĕсем, Америка армийĕн наступленине чарас тесе, хăйсен фронтри çарĕсенех (сăмахран, Комон хули районĕнчен) унта илсе пыма пуçланă. Союзниксем çакна пĕлнĕ те, Англи армийĕн çарĕсем кĕске вăхăт хушшинчех хăйсен пехотипе танкĕсен вăйĕсене урăхла вырнаçтарса лартнă. Июлĕн 30-мĕшĕнче ирхине ирех вара çак çарсем Комон районĕнче наступлени пуçласа янă. Çапла туса, Англи çарĕсем хăйсен участокĕ çине нимĕçсен пысăк вăйĕсене туртса илнĕ, нимĕçсене хăйсен çарĕсене кирлĕ пек йĕркелесе яма паман. Çапла вара Англи çарĕсем американецсене малалла ăнăçлăн куçса пыма лайăх пулăшнă.

Пĕрре сылтăм флангра, тепре сулахай флангра çавăн пек чылай хутчен умлăн-хыçлăнах пыра-пыра çапса, союзниксем нимĕçсен резервĕсене халран янă, кайран вара нимĕçсене сылтăм флангра питĕ вăйлăн пырса çапнă та, Америка армийĕн çарĕсем 150 километр таран малалла кайнă. Американецсен çарĕсен малти чаçĕсем Бискай заливĕ хĕррине пырса тухнă.

Тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, тата унăн çарсене тытса тăрас йĕркине пăсса, союзниксем кăнтăр еннелле—Бискай заливĕ патнелле куçса пыраççĕ; тепĕр енчен, вĕсем хĕвелтухăç еннелле — Франци территорийĕ ăшнелле кĕрсе пыраççĕ.

Августăн 6-мĕшĕ тĕлне фронт çак тĕп пунктсем витĕр пынă: Сен-Мало, Динан, Плоэрмель, Редон, Гемене, Шатобриан, Лаваль, Фужер, Горран, Домфрон; унтан çак пунктсем витĕр: Вир, Ле-Бени-Бокаж, Онэ-сюр-Одон, Эвреси, Бурпебюс витĕр; Троарн витĕр Орн вăрри патнелле. Пĕтĕм фрончĕпех, Сен-Мало хулинчен пуçласа Комон хули патне çитиччен, союзниксен çарĕсем çаплах ăнăçлăн малалла каяççĕ, пуринчен те вăйлăрах сылтăм флангра малалла каяççĕ.

Çапла ĕнтĕ, иккĕмĕш уйăх хушшинче пулса иртнĕ çапăçусем хыççăн союзниксен çарĕсем нимĕçсен оборонине сылтăм флангра татнă та кăнтăралла тата кăнтăрхĕвелтухăçнелле çĕнтерÿллĕн çав тери хăвăрт куçса пыраççĕ.

Тыткăна илнĕ нимĕçсен хисепĕ 100 пин çынна çитет ĕнтĕ. Чылай портсем туртса илнĕ; чăнах та ĕнтĕ, вĕсем ытла пысăк портсемех мар, анчах çапах та вĕсем çарсем, техника тата хĕçпăшал антарса тăма çителĕклех. Малтанхи уйăх хушшинчи вăрçă ĕçĕсем пĕтсе пынă тĕлелле фронт анлăшĕ 120 километр пулнă, халĕ ĕнтĕ, Орн вăрринчен Сен-Назер хули патне çитиччен тÿп-тÿрĕ виçсе кайсан та, фронт анлăшĕ 250 километра çитет. Ку вăл çакна пĕлтерет: нимĕçсене хăйсен резервĕсене вырăнтан вырăна куçарса тăма нумай йывăрланчĕ ĕнтĕ, союзниксен çарĕсен лару-тăравĕ нумай лайăхланнă ĕнтĕ, вĕсем халĕ маневрсем тума ытларах пултараççĕ тата вĕсен тылĕ те халĕ инçене каять ĕнтĕ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Бретань çурутравĕнче союзниксен çарĕсем Брест хули çывăхĕнче хăйсен позицийĕсене çирĕплетеççĕ. Пирĕн танковăй чаçсем Карэ, Ванн, Редон пункчĕсене ирĕке кăларнă, ытти чаçсем Вилей шывĕ çине Ренран пуçласа тинĕс хĕррине çитиччен тухнă. Шато-Гонтье тата Туссэ пункчĕсене тăшмантан тасатнă. Пирĕн çарсем Майенн шывĕ урлă Лаваль хулинчен 17 миля кăнтăртарахра каçса кайнă. Майенн хули пирĕн алăра.

Союзниксен танковăй чаçĕсем Вир хули тулашĕнче çапăçаççĕ. Сен-Север вăрманĕнче тăшман хирĕç тăрассине пуçĕпех пĕтерсе пыраççĕ. Тĕреклетнĕ Сен-Пуа пунктне тытса илнĕ. Ку районра тăшман икĕ хут контратака тунă, анчах та вĕсем ăнăçман. Сен-Пуаран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, йывăр çапăçусем хыççăн, августăн 6-мĕшĕнче, Мон-Пенкон ятлă çÿллĕ вырăна туртса илнĕ. Çав районта Вир хули хушшинче тăшман хытă хирĕç тăрать. Пирĕн çарсем нимĕçсен вăйлă контратакине сирсе янă. Кан хулинчен кăнтăртарахра Мэ-сюр-Орн районĕнче Орн шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче пирĕн чаçсем вырăнăн-вырăнăн атакăсем тунă. Тăшман çак атакăсене хирĕç хытă тăнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн вăрçă объекчĕсемпе транспортне пыра-пыра тапăннă».

НЬЮ-ЙОРК, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка чаçĕсем Майенн хулинчен 35 километр çурçĕртерехре ларакан Донфрон хули патне çитнĕ.

ЛОНДОН, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Америка çарĕсем Бретанĕн çурçĕрти çыранĕнче Динана хулинчен 35 миля хĕвеланăçнерехре ларакан Сен-Бриё хулине тытса илнĕ.

ЛОНДОН, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: паян кăнтăрла иртсен паллă пулнă тăрăх, Бретаньре мĕн пурĕ 13.300 нимĕçе тыткăна илнĕ. Унсăр пуçне, нимĕçсен 3.400 çын вилнĕ.

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ тата çапла пĕлтерет: «Бретаньре союзниксен чаçĕсем Ванн хулипе Лориан хули хушшинчи Орэ пунктне, çавăн пекех тата Юэльгоа пунктне тытса илнĕ. Унсăр пуçне тата Сен-Мало хули çывăхĕнче Шатонеф пунктне туртса илнĕ. Брест хулипе Сен-Мало хулишĕн пыракан çапăçусем халĕ те пĕтмен-ха. Нимĕçсенчен Вир хулине тасатнă хыççăн союзниксен çарĕсем хăйсен çав хуларан кăнтăртарахри позицийĕсене кăштах лайăхлатнă. Ку районра тăшман малтанхи пекех хытă хирĕç тăрать. Союзниксен çарĕсем Тюрирен çурçĕртерехре Орн шывĕ урлă каçаççĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: акăлчансен армийĕн çарĕсем Арно шывĕн кăнтăр хĕрринче лайăх çирĕпленсе ларнă. Кунта тăшман Понтассиеве пунктĕнчен кăнтăртарахра тата Эмполи пунктĕнчен хĕвеланăçнерехре кăна çирĕп тăрать. Кăнтăр Африка чаçĕсем тăшманпа Арно шывĕн çурçĕр енче тата Флоренци хулинче çапăçаççĕ. Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă ĕçсем те пулман.

Союзниксен авиацийĕ Францири, Италири, Югославири вăрçă объекчĕсене, çавăн пекех тата Плоешти районĕсене тапăннă.

ТУРИ СИЛЕЗИПЕ ПОЗНАНЕ ВĂРÇĂ ПЫРАКАН РАЙОН ТЕСЕ ПĔЛТЕРНĔ

СТОКГОЛЬМ, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Моргонтиднинген» хаçачĕ Базель хулинчен çапла пĕлтерет: «Нимĕçсем Тури Силезипе Познане вăрçă пыракан район тесе пĕлтернĕ. Почтăпа телеграфа тата обществăллă ытти учрежденисене те Германин çар органĕсен аллине панă».

ЯПОНИРЕ ВĂРÇА ЕРТСЕ ПЫМА ПĔР ОРГАН ТУНĂ

ТОКИО, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Японин информаци бюровĕ пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерÿре çапла каланă: «Вăрçă ĕçĕсене ертсе пырас тата вăрçă ĕçĕсемпе гражданла служба хушшинче çирĕп çыхăнупа килĕштерÿ тăвас ĕçри тĕп политикăна палăртса пыма вăрçă ĕçĕсене ертсе пымалли аслă совет тунă».

ТОКИО, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «августăн 4-мĕшĕнче нумай вăхăт хушши пынă лару хыççăн Япони кабинечĕ тотальнăй вăрçăн структурине палăртас тĕлĕшпе чи кĕске вăхăт хушшинчех пĕтĕм халăха хĕçпăшаллантарма йышăннă. Çар ĕçĕсен тата тинĕс ĕçĕсен министерствисем, çавăн пекех тата шалти ĕçсен министерствипе çутĕç министерстви пурнăçа кĕртмелли ĕçсене тĕплĕн хатĕрлесе йышăннă хыççăн, вĕсене çав ĕçсене пурнăçа кĕртме хушмалла».

Турци меджлисне каникула яни

АНКАРА, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Турци меджлисне августăн 7-мĕшĕнче çак уйăх пĕтиччен каллех каникула яраççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен управленийĕ Чăвашсен художество училищине вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Училищĕне 15 çултан пуçласа 30 çула çитнĕ çынсене, 7-мĕш класра вĕренсе тухнисенчен кая мар пĕлекеннисене илеççĕ.

Вĕренме кĕрекенсен рисованипе испытани тытмалла тата килте тума хушнă ĕçе туса памалла.

Вĕренме илнисене стипенди параççĕ, общежитие вырнаçтараççĕ, продуктсем 2-мĕш категорири рабочисемпе тан параççĕ.

Заявленисене сентябрĕн 20-мĕшĕччен илеççĕ. Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: 1) хăçан ăçта çуралнине кăтартакан свидетельство, 2) ăçта мĕнле шкултан вĕренсе тухнине кăтартакан свидетельство, 3) сывлăх çинчен çырса панă справка, 4) икĕ сăн ÿкерчĕкĕ (вĕсем çине вĕренме кĕрекенĕн алă пусмалла), 5) çар службине тĕлĕшпе мĕнле шутланса тăнине кăтартакан документ.

Вĕренме кĕмелли испытанисем сентябрĕн 20-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Дом Советов, Управление по делам искусств при СНК ЧАССР.

Промысла кооперацийĕн взаимнăй страховани кассине ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: ĕç сыхлавĕпе хăрушсăрлăх техникин инспекторĕ, старши оргинспектор, бухгалтерсем, ача учрежденийĕсен бухгалтер-ревизорĕ тата врач. Адрес: гор. Чебоксары, Набережная реки Кайбулки, 21.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

августăн 9-мĕшĕнчен пуçласа

КУНСЕРЕНЕХ

музыкăллă çĕнĕ фильм

«ЖИВИ, РОДНАЯ БЕЛАРУСЬ!»

кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 10, 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Çĕнĕ тырра лайăх пăхса усрар

Тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси пĕтĕм халăх ĕçĕ пулса тăрать. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ тырă вырнă, авăн çапнă çĕрте тата турттарнă çĕрте тырпула çирĕп шута илме кирлине, ăна лайăх сыхласа, пăсăлма е тăккалама памалла маррине тата тырпула тирпейсĕр тыткаланине, ăна салатса е вăрласа пĕтерессине хирĕç татăклăн кĕрешме кирлине кăтартса пачĕç. Çавăнпа та халĕ колхозсенче, вăйлă тырпула вăхăтра, тăккаламасăр пуçтарса илнипе пĕрлех, ăна тĕплĕн сыхласа усрасси çине тивĕçлипе çаврăнса пăхмалла.

Çанталăк йĕпе-сапаллă тăнипе вырса илнĕ тата çапнă тырă йĕпенсе пăсăлма та пултарать. Çавна шута илсе, тĕштырра вăхăтлăха хурса усрама — витнĕ итемсемпе лупасайсем, яланлăха хурса усрама — амбарсем кирлĕ таран хатĕрлемелле. Тĕштырă пăсăласран кашни колхозрах çăмăл майпа тырă типĕтмелли сушилкăсем тумалла, пур пек сушилкăсене юсамалла, çавăн пекех хутса ăшăтакан çурт-йĕрсене тырă типĕтмелле туса йĕркелемелле. Уйрăмăнах комбайнсемпе молотилкăсем çапса кăларнă мĕнпур нÿрĕ тырра çийĕнчех итемсенче тата сушилкăсенче типĕтессине лайăх организацилемелле, тырпула купасенче хĕрсе кайма памалла мар.

Иртнĕ çулта чылай районсенче тырă типĕтмелли авăнсемпе сушилкăсем туса хатĕрлерĕç. Кăçал Шупашкар районĕнчи колхозсенче пурĕ 40 авăн ытла юсанă, 4 сушилка çĕнĕрен тунă. Çĕрпÿ районĕнче «Новая сила» колхозра кăçал авăнпа çапсах государствăна 40 центнер, «Красная Армия» колхозра 11 центнер ытла тырă панă. Çавăн пекех ытти колхозсенче те авăнсемпе сушилкăсене юсаççĕ. Анчах ку ĕç хăшпĕр районсенче çителĕксĕр пырать.

Пухнă тырра лайăх пăхса усрас тесен, чи малтанах амбарсемпе складсене юсамалла, çÿп-çапсемпе тусансенчен тасатмалла. Таса мар вырăнта: урай хăмисем хушшинче, çурăксенче, кĕтесри çÿп-çапсем хушшинче тырра сиенлекен хурткăпшанкăсем ĕрчеççĕ. Çавăнпа та амбарсен урайне тата пура хăмисене илсе тасатмалла, ун хыççăн урайне, пура хăмисене, стенасене вĕри шывпа е кĕл шывĕпе çумалла, амбар алăкĕсене уçса уçăлтармалла. Амбарсене, складсене çуса тасатнă хыççăн, извĕçпе краççин сапса е каустически сода шĕвекĕпе дезинфекци тумалла.

Извĕçпе краççин шĕвекне çапла хатĕрлемелле: 2 килограмм сÿнтермен извĕçе сÿнтерсе, ун çине 5 литр шыв ямалла тата 1 килограмм краççин ярса хутăштармалла. Çак шĕвекпе вара амбар урайĕсене, стенасене, пура хăмисене пĕтĕмпех шуратмалла. Хатĕрленĕ шĕвек кашни тăваткăл метр çине 0,5 литр таран кирлĕ. Сирпĕтмелли аппаратсемпе ĕçлемелли хутăшăва хатĕрленĕ чухне 2 килограмм извĕçе 10 литр шыв çине ямалла та ун çумне пĕр килограмм краççин хушмалла.

Извĕçсĕр пуçне тата амбарсене каустически сода (едкий натр) шĕвекĕпе те дезинфекцилеме пулать. Ăна 10 литр шыв çине 1,5 килограмм каустически сода ярса хутăштарса сĕрмелле. Ку шĕвеке сирпĕтмелли машинăсемпе сирпĕтмелле. Извĕçпе краççин е каустически сода çук пулсан амбарсене вĕри кĕл тăррипе е вĕри шывпа та дезинфекцилеме пулать.

Амбарсем айĕнчи тата вĕсен çывăхĕнчи тусана, çумкурăксене, тĕрлĕрен тăккаланчăксене йăлтах пуçтарса тасатмалла, пухнă çÿп-çапсене çунтармалла, е çĕре алтса хумалла. Тасатнă вырăна сÿнтермен извĕç сапса тухмалла.

Итемсене те çавăн пекех кивĕ улăмсенчен, тĕрлĕрен тăккаланчăксенчен, арпасенчен тĕплĕн тасатмалла, вĕсен вырăнне извĕçпе сапса тухмалла. Кивĕ, тасатман итемсем çинче тырра клещ ересрен сыхланмалла.

Ялхуçалăх машинисене, турттармалли япаласене — урапасене, михĕсене, шăналăксене тата ытти авăн çапнă çĕрте усă курмалли япаласене пурне те çуса тасатса дезинфекци тумалла. Машинăсен йывăç пайĕсене, михĕсене, шăналăксене тата ытти асăннă япаласене пурне те вĕри шывпа е кĕл тăррипе лайăх çуса, хĕвел çинче е çилпе типĕтмелле; машинăн тимĕр пайĕсене çупа тата краççинпа сĕрсе тасатмалла. Тасатнă япаласене кивĕ улăм куписем çинче е таса мар, клещлĕ тырăсемпе тыткалама юрамасть.

Тырра амбара хуриччен малтанах лайăх тасатмалла, клещ е ытти сиенлекен хурткăпшанкăсем пуррипе çуккине тĕрĕслесе тухмалла. Тасалăх — тырпула лайăх пăхса усрамалли условисенчен пĕри пулса тăрать. Тырпул тусанлă, тăпраллă, çÿпçаплă пулсан, усранă чухне часах нÿрелсе пăсăлма пултарать, ун пек тырпулăн пахалăхĕ чакать. Тасамарлăх, сиенлĕ çумкурăк вăррисем нумай пулни пуринчен ытла вăрлăхлăх тырра пăсать. Ун пек вăрлăх чипер усранă çĕртех чĕрĕлсе вĕриленме тытăнать, унăн шăтас пахалăхĕ чакма пуçлать.

Таса пулнисĕр пуçне, упраса усракан тырă кирлĕ таран типĕ пулмалла. Амбарсене хуракан тырăра нÿрĕ 13—15 процентран мала пулмалла мар. Таса мар тата нÿрĕ тырăра клещ тата ытти сиенлекен хурт-кăпшанкăсем хăвăрттăн ĕрчесе, тырра сиен кÿреççĕ. Клеще ĕрчеме 8—10 градус ăшă пулни тата ытлашши нÿрĕ пулни лайăх услови пулса тăрать. Клещ тырăн шăтса тухас вырăнне — зародышне çисе сиенлет, тырă шăтса тухассине 40 процент таран чакарать.

Çавăнпа та клещ пулсан, ăна пĕтермелле, тырра хĕвелпе типĕтмелле, ун хыççăн алăпа е машинăсемпе аласа тасатмалла.

Халĕ çанталăк йĕпе тăнă пирки тырпул нÿрелме пултарать. Çавăнпа та, тырă нÿрĕлĕхĕ 15 процентран мала иртет пулсан, ăна типĕтмелле, кĕлете хунă тырă ытлашши хĕрсе е нÿрелсе каясран сăнасах тăрас пулать. Тырă хĕрме тытăнсан ăна пăтратмалла, кĕлет алăкĕсене уяр çанталăкра уçса уçăлтармалла, хĕвел çинче е типĕ сывлăшра, сушилкăра типĕтес пулать.

Хĕвелпе е типĕ сывлăшпа типĕтме май килмесен, тырра авăнра, сушилкăсенче, е ăшă çуртра 5—8 сантиметр хулăнăш сарса типĕтме пулать. Ун пек çĕрте ăшă пĕр пек, цельсипе 40—45 градус тăратмалла. Тыррине вара тăтăшах пăтратсах тăмалла.

Вăрлăхлăх тырă мĕн чухлĕ нÿрлĕрех, типĕтекен ăшă çавăн чухлĕ каярах пулмалла, типĕтнĕ чухне пÿлĕме çителĕклĕ таран вентиляци туса тасатмалла. Типĕтнĕ тырра яланах сортировка витĕр тепĕр хут çаврăрса кăлармалла.

Тырă кĕлетсенче усранă чухне хĕрнипе хĕрменнине юри хатĕрленĕ типĕ патаксем е тимĕр туясем тырă купи варрине лартса пĕлме пулать. Вĕсене вара вăхăчĕ-вăхăчĕпе тырă пуринчен кăларса, вĕсем вĕриленнине, тарланине сăнаса пăхмалла. Тырă вĕриленме пуçласан, ăна пăтратмалла, машинăсем витĕр çаврăрса кăларса, тырă купин хулăнăшне чакарса типĕтме тытăнас пулать.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ вăрлăх участокĕсем çинчи тырпула уйрăм пухса кĕртме кирлине, çав участоксем çинчи вăрлăхлăх тĕштырра сыхласа хăварасси çине тимлĕн çаврăнса пăхма кирлине кăтартса пачĕç. Вăрлăх участокĕсем çинчен пухса илнĕ тырра уйрăмăн çапмалла, уйрăм кĕлетсене хумалла тата кашни колхозрах хывнă вăрлăха кладовщик аллипе уйрăм акт тăрăх памалла. Çав актра, кашни культурăпа сорт тăрăх, мĕнле пахалăхлă тата мĕн чухлĕ вăрлăх хывнине кăтартса памалла.

Сортлă тырăсене, вĕсем пĕр-пĕринпе хутшăнса каясран, уйрăм складсенче, уйрăм пÿлĕмсенче усрас пулать. Хăшпĕр йышши вăрлăхсене (кĕрхи тулăпа ыраша, тулăпа пăрине, урпапа сĕлле) пĕр-пĕринчен уйăрма питĕ йывăр. Çавăнпа та ун пек вăрлăхсене, хутăшса каясран сыхланса, юнашар пÿлĕмсене хума юрамасть. Вăрлăх пÿлĕмĕсенче тырă купи хулăмĕшĕ 1,5—2 метртан мала пулмалла мар.

Вăрлăха лайăх усрас тесен, ăна пĕрмаях тĕрĕслесе тăмалла. Кĕлетри тăккаланчăксене тата çÿп-çапсене тăтăшах шăлса тасатмалла. Кĕлете шыв анасран çуртăн çийĕсене яланах асăрхамалла. Тырă усранă кĕлете кĕриччен урасене тата ытти япаласене те тасатса кĕмелле, мĕншĕн тесен вĕсем çумне клещ часах çыпăçса кĕме пултарать.

Тырра аван пăхса усранипе унăн пахалăхне ÿстерер, вăл пысăк тухăçлă тырпул илме пулăшĕ.

Агроном Н. КОНДАКОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноспа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00626 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 16.000 экз.